Шупашкар район хаҫачӗ ❋ 1932 ҫулхи июлӗн 27-мӗшӗнче тухма пуҫланӑ

# ТĂВАН ЕН

59 (9201) № ❋ 2006 ҫулхи майăн (ҫу уйăхӗн) 31-мӗшӗ. Юн кун ❋ Хакӗ ирӗклӗ

❋ Пенси

## ҪИТӖНӲ - ХАЛĂХПА ТИМЛӖ ПУЛНИНЧЕ

**Июнӗн 8-мӗшӗнче хăйсен профессиллӗ уявне паллă тăвакан РФ Пенси фончӗн управленийӗнче юлашки вăхăтра улшăнусем сахал мар пулса иртрӗҫ. Яваплăхӗ те, ӗҫӗ те хутшăнчӗ. Редакцийӗн паянхи хăни - РФ Пенси фончӗн районти управленийӗн ертӳҫи А.М.ИСАЕВА - хăйсен ӗҫӗ-хӗлӗпе паллаштарать.**

**- Алевтина Михайловна, управленин тӗп задачисенчен пӗри вăл - персонификаци учетне туса пырасси. Ку енӗпе кăтартусем еплерех?**

- Астăватăр ӗнтӗ, 1998 ҫул вӗҫӗнче Шупашкар районӗ, пӗтӗм Чăваш Республикипе пӗрлех, граждансене патшалăхăн пенси страхованийӗн системинче уйрăммăн шута илес ӗҫӗн пӗрремӗш этапне вӗҫленӗччӗ. 2000 ҫултан пуҫласа вара Пенси фончӗн информаци базинчи кашни ҫыннăн уйрăм счечӗ ҫинчи кăтартăвӗсемпе усă курса пенси шутласа пама май тунă. Пенсионерсене те патшалăхăн пенси страхованийӗн системинче уйрăммăн шута илтӗмӗр. Паянхи куна илсен усă уйрăм счечӗсен шучӗ 48 пин те 51.

2002 ҫултан кашни ҫыннăн уйрăм счечӗ ҫине пенсин страховкăлла тата пухăнса пыракан пайӗсем валли куҫарнă информацине, 2003 ҫултан - страхланнă ҫынсен патшалăхăн пенси фондӗнчен ытти, патшалăхăн мар, пенси фондне куҫнă информацине кӗртсе пыма тытăнтăмăр. Управленин специалисчӗсем кăҫалхи мартăн пӗрремӗшӗ тӗлне 2005 ҫулшăн 482 предприятирен 27 пин те 160 страхланă ҫын счечӗ ҫине сведенисем кӗртнӗ. Унта ҫынсен ӗҫ стажне, счет ҫине килнӗ страховкăлла взноссене палăртнă. Вăхăтра сведенисем тăратман предприятисем те пур-ха. Саккуна пăхăнманшăн вӗсем ҫинчен прокуратурăна сведенисем тăратнă.

**- Хăвăр енчен мӗнле мерăсем йышăнатăр?**

- Ҫулталăк пуҫланнăранпа ку енӗпе ӗҫлекен пай специалисчӗсем уйрăм предпринимательсем ҫине 588,77 пин тенкӗлӗх 584 хушу тăратнă, тăхăр вун саккăрăшӗ тӳлерӗҫ. 433-шӗ пирки йышăну кăларнă, вӗсен сумми пӗтӗмпе 471,33 пин тенкӗпе танлашать. Тӳлев дисциплинине пăснишӗнех прокуратура представителӗпе пӗрле кăҫал виҫӗ хутчен комисси пухма тиврӗ. Унта 21 предприяти ертӳҫине явăҫтарнă.

Кашни ҫул РФ Пенси фончӗ страхланнă ҫынсене вӗсен счечӗ ҫинчи информацие извещени формипе ярса парать. Персонифицированнăй учетăн информациллӗ бази кӗске вăхăтра патшалăхран социаллă пулăшу илес ҫынсене федераллă регистра кӗртме пулăшрӗ.

**- Паянхи куна районта пурăнакан пенсионерсен хисепӗ миҫе-ши?**

- Апрелӗн 30-мӗшӗ тӗлне пурӗ 13 пин те 464 пенсионера шута илнӗ. Вӗсенчен 10 пин те 163 ҫын ватлăхпа паракан ӗҫ пенсине илеҫҫӗ, 1 пин те 111 - тăлăх ачасен, 687 - социаллă пенси.

**- Пенси калăпăшӗ пирки калас пулсан...**

- Апрелӗн 1-мӗшӗнче РФ Правительствин постановленийӗпе килӗшӳллӗн, ӗҫ пенсийӗсен базăллă пайӗн виҫине 8,5 процент, пенсин страховкăлла пайне 6,3 процент индексациленӗ. Вăтам пенси хакӗ 2414,51 тенкӗпе танлашать. Индексациленӗ хыҫҫăн, хамăр районтине илес пулсан, пенси тӳлеме 2 миллион тенкӗ ытларах кайма пуҫларӗ. Январь-апрель уйăхӗсенче 143,960 млн тенкӗ пенсисемпе пособисем, федераллă регистрта шутланса тăракан ҫынсене ҫăмăллăхсем выранне 16,612 млн.тенкӗ тăкакланнă.

**- Федераллă регистра кӗрекен ҫынсене ҫăмăллăх выранне укҫа пани сирӗн специалистсен ӗҫне кăткăслатрӗ мар-и?**

- Ҫаплах, питӗ ҫивӗч ӗҫлеме тивет. Йывăрлăхӗ уйрăмах малтанхи вăхăтра сисӗнчӗ. Халӗ карта кӗтӗмӗр ӗнтӗ.

**- Алевтина Михайловна, техника базине лайăхлатни килекен ҫынсен кăмăлне тивӗҫтерни куҫ кӗрет. Уйрăмах клиент службине йӗркелени.**

- Чăннипех те, уйрăм пӳлӗмсем пурри хăйӗн ыйтăвӗпе килнӗ ҫынна калаҫăва «клиент-специалист» формăпа йӗркелеме май парать, информаци те вăрттăнлăхра юлать. Ҫавна май ҫын пăлхану кӳмесӗрех специалистран кирлӗ ыйту ҫине тивӗҫлӗ хурав туять. Ҫакна граждансене йышăнас ӗҫӗн пахалăхне ӳстерес тӗллевпе тунă.

**- Профессилле уяв кунӗ ҫитнӗ май салам сăмахӗсӗр ниепле те иртеймӗн ӗнтӗ.**

- Май пуррипе усă курса ӗҫтешӗмсене чунтан тав тăвас килет. Пенсипе тивӗҫтерессин йывăр ыйтăвӗсене эсир хăвăрăн ӗҫе юратса, тӗллӗ пурнăҫланипе татса пама пултаратăр. Халăхпа тимлӗ ӗҫлеме пӗлнинче те ҫитӗнӗвӗн тӳпи пысăк. Уяв ячӗпе сире!

**И.ВАСИЛЬЕВА.**

❋ Республика хыпарӗсем

### *МУНИЦИПАЛИТЕТСЕН ПӖРЛЕШӖВӖ*

**Майăн 27-мӗшӗ.** Эрне кун Шупашкарта кăҫал йӗркеленнӗ муниципалитетсен представителӗсен 1-мӗш съезчӗ пухăннă, пурӗ - 317 делегат. Президент хăйӗн саламлă сăмахӗнче тӗплӗнрех «АПК аталанăвӗ» наци проектне ăнлантарса панă, вăл ăста мӗнле пурнăҫланнине тишкернӗ. Ҫӗнӗ влаҫăн вăя шеллемесӗр ӗҫлемеллине каланă. «Республикăран сирӗн пата каякан пулăшăвăн калăпăшӗ тӳрремӗнех выранта ял хуҫалăх производствине, ҫурт-йӗр строительствине мӗнле аталантарнинчен, ял-поселоксене хăтлăх еплерех кӗртнинчен килет»,- тенӗ Н.В.Федоров. Съездра тăхăр ыйту пăхса тухнă, ҫав шутра муниципалитетсен Канашне йӗркелесси, Уставне йышăнасси, Правленине суйласси. Пурне те ăнăҫлă татса панă. Правлени председателӗ пулма Шăмăршă район ертӳҫине В.П.Фадеева ҫирӗплетнӗ. Правлени йышне ҫавăн пекех пирӗн районӑн администрацийӗн пуҫлăхне А.П.Князева та суйланă.

### *ИЗВА ОООра - АНЛĂ МЕРОПРИЯТИ*

**Майăн 26-мӗшӗ.** Районти чи пысăк та паллă предприяти - Ишлейри пысăк вольтлă аппаратура завочӗ иртнӗ эрне вӗҫӗнче хăйӗн клиенчӗсемпе партнӗрӗсене пухса виҫӗ кунлăх семинар ирттерчӗ. Пурӗ 80 ытла Раҫҫейри, чикӗ леш енчи предприяти хăйӗн представительне янă. Хăнасене Чăваш Енӗн промышленноҫпа энергетика министрӗ Ю.Волошин, «ЧЭАЗ» АУОн директорӗсен канашӗн председателӗ М.Шурдов, «ИЗВА» ООО генеральнăй директорӗ В.Фомиряков хапăл туса кӗтсе илнӗ. Уйрăммăн илсен, аякран килнӗ хăнасем завод кăларакан продукци пахалăхӗ ӳснине, хакӗ вара пысăк мар пулнине палăртнă. Кун пек семинар заводра иккӗмӗш ҫул иртет.

### *КӲКЕҪРИ ĂМĂРТУСЕМ*

**Майăн 28-мӗшӗ.** Икӗ кун Кӳкеҫри тӗп стадионта ҫăмăл атлетика енӗпе Чăваш Республикинчи ăмăртусем пулчӗҫ. Тӗрӗссипе, ăмăртусен пӗр пайӗ, мӗншӗн тесен вӗсен тепӗр пайӗ Шупашкарта иртнӗ. Кунта кăтартнă результатсенчен нумайăшӗ стадионшăн чи лайăх кăтартусем пулнă. Чемпионата йӗркелекенсемпе хутшăнакансене стадион килӗшнӗ, вӗсем малашне те Кӳкеҫе килме хирӗҫ мар.

Маларах вара, эрне кун, республикăри спартакиада шучӗпе шкул ачисен ăмăртăвӗсем иртнӗ. Вăл та ҫăмăл атлетика енӗпе. Пӗрремӗш выранa Ҫӗнӗ Шупашкарсем, иккӗмӗшне Етӗрнесем, виҫҫӗмӗшне Красноармейскисем тухнă.

❋ Вырăнтан килнӗ хыпарсем

### ШЕМШЕРТЕ ПУЛĂШАҪҪӖ

Иртнӗ эрнери районти социаллă аталану пайӗ ҫумӗнчи правăна пăсассине хирӗҫ кӗрешекен комисси Шемшер ял тăрăхӗнче Профилактика кунне ирттерчӗ. Эрех ӗҫсе ниҫта та ӗҫлемесӗр пурăнакансене вăхăтра тӳрлеме пулăшас тесе кашнинпех уйрăмшар калаҫҫӗ. Ку хутӗнче тăватă ҫынна чӗнтернӗ, йывăр лару-тăрулă пӗр ҫемьене ҫитсе килнӗ.

«Вырăнти комисси кăҫал 15 ҫынна чӗнтерчӗ, ун хыҫҫăн 9-шӗ ӗҫе вырнаҫнă. Ытларах чух Свердлов хуҫалăхӗпе килӗшӳ туса ӗҫе кӗреҫҫӗ. Администраци хăй енчен кил-ҫурт ҫавăрма та пулăшать. Кăҫал строительство ӗҫӗсем пуҫарнă икӗ механизатора материал илме пулăшу патăмăр,- каласа парать Шемшер ял тăрăхӗн пуҫлăхӗ И.П.Харитонов. - Сăмакун сутакан виҫӗ ҫынна тытса явап тыттарнă. Урамри тасалăха сыхласси пирки те асăрхаттарсах тăратпăр. Кил умӗнче выртакан япаласене пуҫтарманшăн кăҫал 25 протокол ҫыртăмăр ӗнтӗ. Стройка пуҫланă виҫӗ ҫын кил умӗнчи ҫӗре арендăна илме тесе килӗшӳ турӗҫ».

**А.ИЗМАН.**

### *ХАВАСЛĂ ӖҪ - ЧУН КАНĂҪӖ*

Тутаркасси ял тăрăхӗнчи ялсенче тирпейилем кӗртес енӗпе хӗрӳ ӗҫ пырать. Кашни ялта урамра выртакан строительство материалӗсене тасатаҫҫӗ. Ялти старостасем тӗрӗслесе тăраҫҫӗ. Тутаркасси поселокӗнче те нумай хваттерлӗ ҫуртсем умӗнче пурăнакансем чечексем лартма тухрӗҫ. Калчисене шкул округӗн депутачӗ Дина Алихметкина, «Атлашевский» ЯХК ӗҫченӗсен теплицăра ӳстерсе пачӗҫ. Унсăр пуҫне ҫынсем хăйсен дачисенчисене те шеллемесӗрех ҫуртсем умне куҫарса лартрӗҫ. Чечексене лартнă ҫӗрте 60-70 ҫулхи асаннесем те, 5-7 ҫулхи ачасем те ăмăшӗсемпе пӗрле тăрăшса ӗҫлерӗҫ. Кашниех хăйсен ҫурчӗ умне хитререх тума тăрăшрӗ: пӗрисем ҫӗр чаврӗҫ, теприсем шыв йăтрӗҫ, чечексем лартрӗҫ. Вырăнти администраци хăш ҫурт умӗнчи клумбăсем хитререх пулнине август уйăхӗн вӗҫӗнче конкурс йӗркипе пăхса тухас терӗ. Мала тухнисене парне парса хавхалантарма шантарчӗ.

**А.ЕЛИМОВ,**
**Тутаркасси ял тăрăхӗн пуҫлăхӗ.**

### *КИЛСЕМӖР АКАТУЯ, САВĂНĂР ЧУНТАН*

*Кăҫалхи Акатуя Ăс-хакăл пуянлăхӗн ҫулталăкне халалланă*

**Унăн программи**
**(Июнӗн 2-мӗшӗ)**

***«Хӗвеллӗ-1» уҫланкăра***

**9⁵⁰-10⁰⁰ - парапанҫăсен композицийӗсем, хор произведенийӗсем**

**10⁰⁰-11³⁰- уява уҫни, докладсем, саламсем, производствăра малта пыракансене чыслани.**

**11³⁰-14³⁰-художество пултарулăх коллективӗсемпе эстрада юрăҫисен концерчӗ, культурăпа массăллă тата спорт мероприятийӗсем, конкурссем, эстрада ҫăлтăрӗсен концерчӗ.**

***«Хӗвеллӗ-2» уҫланкăра***

**13⁰⁰-14¹⁰- лаша спорт шкулӗн кăтартăвӗсем, юртă лашасем 2400 метрлă дистанцире ăмăртни.**

*— Июнӗн 1-мӗшӗ - Ачасене хӳтӗлемелли кун —*

### *Хаклă ентешӗмӗрсем!*

*Чăваш республикинче пурăнакан пӗчӗккисене тата вӗсен ашшӗ-амăшне Пӗтӗм тӗнчери ачасене хӳтӗлемелли кунпа чун-чӗререн саламлатăп.*

*Ырă тата таса чунпа ачасем аслисен тӗнчине кӗреҫҫӗ. Пирӗн вара вӗсене ҫак лайăх енсене сыхлас хăварма, йывăрлăха ҫӗнтерме, тăван ене юратма вӗрентсе, пулăшса пымалла.*

*Паян Чăваш Енре пӗчӗккисене тӗрлӗ енлӗ аталантарма пур услови те пур. Вӗрентӳ учрежденийӗсенче ҫӗнӗ информаци технологийӗсемпе ӗҫлеме пуҫларӗҫ, паянхи кун ыйтакан физкультурăпа спорт комплексӗсем ҫӗкленеҫҫӗ. Пултарулă ачасене ҫул уҫса пыма, тăлăхсемпе инвалидсене пулăшма ятарлă программăсем ӗҫлеҫҫӗ.*

*Чăваш Республикинче кăҫал пӗрремӗш хут нумай ачаллă ҫемьесен слечӗ иртнине те палăртма кăмăллă.*

*Пурне те сире сывлăх, телей, юрату сунатăп. Сирӗн ҫуртра ялан хăтлăх хуҫалантăр, ача кулли янратăр.*

**Н.ФЕДОРОВ,**
**Чăваш Республикин Президенчӗ.**

### *Ҫамрăк ентешӗмӗрсем!*

*Сире пурне те Тӗнчери ачасене хӳтӗлемелли кун ячӗпе ăшшăн саламлатăп.*

*Ҫак кун ҫитӗннисем ӳссе пыракан ăрушăн тăрăшнипе палăрса тăрать. Аслă ăрăвăн пархатарлă тивӗҫӗ - нушаллă пурăнакансене пӗрмай пулăшса, ача прависене тытса пырасси тата хӳтӗлесси, общество валли ырă кăмăллă, тарăн пӗлӳллӗ ӗҫченсене ҫитӗнтересси. Малашне те йывăр лару-тăрура пурăнакансене - инвалидсене, тăлăхсене мӗн май килнӗ таран пулăшма тăрăшăпăр.*

*Хаклă ҫамрăк туссем! Ҫак кун пурне те хаваслă кулă, ырă кăмăл, ӑнăҫ ăмӗтсем парнелетӗр. Ҫуллахи каникул хаваслă иртӗр, спортпа туслă пулăр, тавракурăма пуянлатăр. Уйрăмах тăванăрсемпе ҫывăх ҫыннăрсем сире юратупа тимлӗх парнелеччӗр.*

*Ҫирӗп сывлăх пурне те, вӗренӳре е творчествăра ăнăҫупа ҫитӗнӳ сунатăп.*

**А.КНЯЗЕВ,**
**район пуҫлăхӗ.**

### *ЧИКӖ ХУРАЛҪИСЕНЕ ЧЫСЛАРӖҪ*

Тăван ҫӗршывăмăрăн чиккисене сыхлама тӳремӗнех хутшăннă салтаксене халалланă уява ятарлă митингпа уҫрӗҫ. Районти культура керменӗ умне ҫав ятпа халăх йышлă пухăнчӗ. Савăнăҫлă уява Кӳкеҫ поселокӗнчи салам сăмахӗ каласа хăй те чикӗ хуралҫи пулнă район администрацийӗн пуҫлăхӗ Анатолий Князев уҫрӗ, ун хыҫҫăн районти ҫар комиссарӗ Александр Кочуров сăмах илчӗ. Ҫӗршыв умӗнчи тивӗҫе пурнăҫланă чухне паттăррăн вилнӗ ентешсене асăнса митинга пухăннисем пӗр самант шăп тăчӗҫ, палăк умне чечексем хучӗҫ. Юлашкинчен ҫӗршыв чиккисене хураллакан салтаксене районти пултарулăх ушкăнӗсем концертпа савăнтарчӗҫ.

**Н.СТЕПАНОВА.**

❋ Синоптиксем пӗлтернӗ тăрăх

**Юн кун, майăн 31-мӗшӗ**
пӗлӗтлӗ ҫанталăк
кăнтăрла +17... +19
ҫӗрле +9... +11

**Кӗҫнерни кун, июнӗн 1-мӗшӗ**
улшăнса тăракан пӗлӗтлӗ ҫанталăк, кăштах ҫумăр ҫăвать
кăнтăрла +25... +27
ҫӗрле +11... +13

**Эрне кун, июнӗн 2-мӗшӗ**
улшăнса тăракан пӗлӗтлӗ ҫанталăк
кăнтăрла +21... +23
ҫӗрле +10... +12

**Шăмат кун, июнӗн 3-мӗшӗ**
пӗлӗтлӗ ҫанталăк кăштах ҫумăр ҫăвать
кăнтăрла +21... +23
ҫӗрле +11... +13

# АПАШ КУЛЬТУРИНЧЕ - ХĂНАСЕМ

**Виçĕ çул каялла, Апаш ялĕ çумĕнче В.П. Нагорнов, А.А.Трофимов авторсем хатĕрленĕ «Апаш культури» паллă знак çĕкленсе ларчĕ. Çавăн пекех А.И.Алексеевăн ĕçĕ те, «Апаш» декорацине скульптура композицийĕ, уçăлчĕ. Çакă шăпах майăн 26-мĕшĕнче пулса иртнĕччĕ. Çав кун кашни çулах пирĕн района хăнасем килеççĕ - район администрацийĕ тата Чăваш Патшалăх гуманитари институчĕпе И.Н.Ульянов ячĕллĕ Чăваш Патшалăх университечĕ Апаш вулавĕ ирттереççĕ. Çакна Апаш культурипе халăха паллаштарас, тăван ен историне таранн̆ан пĕлес тĕллевпе йĕркелеççĕ.**

Эрне кун «Апаш» композици патĕнче чăваш тумĕ тăхăннă çынсене, çамрăксене нумайăшĕ курчĕ. Кунта пуçтарăннисем ваттисене асăнчĕç. «Эй, Ана амăшĕ, Эй Вут амăшĕ, эй, Шыв амăшĕ, çак палăка сыхласамăрччĕ...»- театраллă йăлана О.А.Ерилеева ертсе пыракан Апашри клуб-музейри халăх театрне çӳрекенсем ирттерчĕç. Кун хыççăн хăнасем клуб-музее çитрĕç. Район администрацийĕн ячĕпе пухăннисене социаллă аталану уйрăмĕн начальникĕ В.Н.Мустаев саламларĕ.

Кăçал çĕнĕлĕх те пулчĕ - пĕрремĕш хут вулава Апаш шкулĕн вĕренекенĕсем хутшăнчĕç. ЧПУ студенчĕсен, истори факультечĕн 1-мĕш тата 3-мĕш курсĕсенче вĕренекенсен ĕçĕсене интересленсех итлерĕç вĕсем. Хăйсен вĕрентекенĕ пулнă, халĕ кануури Р.А.Евдокимова Апаш ялĕн историне анлă пĕлнине кăтартрĕ. Унăн пуххисем студентсене те интереслентерсе ячĕç. Шкула çӳрекенсем, 6-мĕш класри Никита Антонов, Ирина Суркова, Надежда Александрова Улăп паттăр çинчен халап калама пит ăста вара.



А.СУСМЕТОВА фото ӳкерчĕкĕ.

Палăртма кăмăллă, кунта Санкт-Петербургри зоологи институчĕн аспирантки Е.А.Петрова, «Терра инкогнито» естествăлла истори пĕрлешĕвĕн председателĕ А.Ю.Березин тата ыттисем те килнĕ.

Апаш культурин палăкĕ патĕнчи улăп тăпри çинче фольклор коллективĕ сумлă хăнасене Апашран тухса каяс умĕн çулăма пуç çапнин йăлине кăтартса пачĕç.

Çак кунах мероприяти йĕркипе вулава хутшăнакансем Пикшикри улăп тĕми патĕнче пулчĕç. Çакă та Апаш культурин палăкĕ шутланать. Ăна 1926 çулта Хусан университечĕн профессорĕ В.Ф.Смолин тупса палăртнă. Пикшикрен çур километр кунтарах вырнаçнă тĕмере 27 тĕмескерен 14-шне 1957-58 çулсенче Н.Л.Мерперт уçнă. Хăнасене кунта Шорккари фольклор коллективĕ тата Çатра-Хочехмат шкулĕнчи ача-пăча фольклор коллективĕ хапăл туса кĕтсе илчĕ. Çăл куç типмест - пурнăç пĕтмест, аваллăх вĕрет - чăвашлăх кĕрлет тесе ахальтен каламан ĕнтĕ. Иртнине пĕлекен халăхăн малашлăхĕ пурах.

**А.СУСМЕТ.**

**✵ Йăла-йĕркене тытса пыраççĕ Апашсем.**

# ОБЪЯВЛЕНИЯ. ПĔЛТЕРӲСЕМ

☎ 2-13-80

## Ăшшăн саламлатпăр



**Кӳкеçри лицейра ĕçлекен В.К.Леонтьевана вĕренӳ çулĕ вĕçленнĕ ятпа саламлатпăр. Кирлĕ самантра ачасен аслă тусĕ пулма пĕлнишĕн тав тăватпăр. Ăнăçу, çирĕп сывлăх сире!**

**4 «в» класс пĕтерекенсемпе вĕсен ашшĕ-амăшĕ.**

## Торговый дом «Агросоюз 21 регион» организует

пункты приема продовольственного - картофеля(включая ранний урожай) и свеклы столовой у сельхозпредприятий и частных лиц урожая 2006 года. Пункты приема будут организованы на базе:

**СПК «Слава» с. Ишаки,**
**СПК - колхоз «Пучах» д. Пархикасы,**
**колхоз «1-ое Мая» с. Икково.**

*По вопросам реализации обращаться по тел.: 53-2-12 (Пучах), 2-12-40 (Слава).*

---

К сведению пайщиков Ишлейского райпо

До 30 июня 2006 года проводится перерегистрация пайщиков Ишлейского райпо. Обратиться по месту жительства в магазины райпо к доверенным лицам или в райпо. При себе иметь паспорт, налоговое свидетельство (ИНН), паевую книжку.

Постановлением собрания уполномоченных райпо от 16 февраля 2006 года сумма паевого взноса установлена 50 рублей. Все пайщики должны стать полнопайными и пройти перерегистрацию . При отсутствии денег в счет взноса магазинами принимаются сельхозпродукция, шерсть, лекарственные травы, вторсырье (макулатура, тряпье, пленки)

Неполнопайные пайщики и не прошедшие перерегистрацию, исключаются из числа пайщиков райпо.

Телефоны: 31-2-71 бухгалтерия, 31-3-57 ОК, 31-5-07 правление

---

Совет Кугесьского райпо извещает о том, что с 29 мая по 25 июня 2006 года начинается перерегистрация пайщиков Кугесьского райпо. Просим пайщиков обратиться к доверенным лицам-завмагазинам деревень или в офис райпо по адресу п.Кугеси ул.Советская,4а. При себе иметь паевые книжки. Не прошедшие перерегистрацию будут автоматически исключены из состава пайщиков райпо согласно постановлению собрания уполномоченных Кугесьского райпо от 16.02.2006 г.

---

Аукцион с открытой формой подачи предложений о цене по продаже транспортных средств, объявленный управлением экономики, имущественных и земельных отношений администрации Чебоксарского района 26 апреля 2006г. признан несостоявшимся по причине отсутствия заявок.

Комиссия по проведению аукциона.

---

Участники долевой собственности Русакова Р.Н., Русакова Е.Ю., Русаков А.Ю., проживающие в д.Кибечкасы, ул.Совхозная, д.18, Андреев В.А., проживающий в д.Адылъялы, ул. Крестьянская, д.28, сообщают о своем намерении выделить земельный участок по следующим ориентирам и площадям: в поле №2 второго севооборота южнее д.Адылъялы площадью по 1,47 га пашни. Площадь образуемого участка осуществляется в пределах кадастровой стоимости, установленной для с/х угодий, в границах которых образуется данный земельный участок. Возражения просим присылать в течении месяца в наш адрес и в адрес МРО №5 Управления Роснедвижимости по ЧР, п.Кугеси, ул.Шоссейная, д.9.

---

**Дополнение к объявлению.** В газете «Тăван Ен»в № 4 от 19.01.2005 г. в объявлении собственников земельных долей Ешметьева А.А. и др. прошла неточность. После слов «в поле №2» следует добавить «третьего». Вместо выбывших 4 долевиков приняты Ильин Ф.Я., Ильина А.И., Ильин Я.П. Далее следует читать по тексту.

✵ ✵ ✵

Иккассинчи вăтам шкул коллективĕ нумай çул учительте ĕçленĕ

**Анна Прокопьевна КУДРЯВЦЕВА**

вилнĕ пирки чĕререн хурланни çинчен пĕлтерет.

---

Тренккассинчи вăтам шкул коллективĕ çак шкулта нумай çул хушши ĕçленĕ

**Маргарита Николаевна АНТОНОВА**

вăхăтсăр вилсе кайнишĕн чĕререн хурланнине пĕлтерет.

---

Предполагается предоставление в собственность за плату земельного участка площадью 0,12 га с кадастровым номером 21:21: 07 15 02: 00 22, расположенного по адресу: Чувашская Республика, Чебоксарский район, д.Устакасы, ул. Зеленая, д.16 А (земли поселений), для огородничества.

---

***Продается телка 1 год 4 месяца. Адрес: Чебоксарский район, дер.Мокшино, Филиппов Валентин Филиппович.***

---

Участник долевой собственности СХПК «Сад» Семенов А.И., проживающий в г.Чебоксары, ул.Парижской коммуны 12-4 сообщает о своем намерении выделить земельные участки: площадью 0,747 га и 0,4 га в кадастровом квартале 21:01:02 07 04, площадью 0,58 га и 0,273 га в кадастровом квартале 21:01:02 06 02 в районе ул.Б.Хмельницкого в г.Чебоксары. Возражения прошу направлять в мой адрес и в МУП «Земельное Управление по адресу: г.Чебоксары, ул.50 лет Октября, 10 а, в течение месяца со дня публикации.

---

***Продаю: пиломатериал хвоя. Дешево. Цены от 1300 руб за 1 $м^3$. Срубы, любой размер на заказ. Тел. 2-22-17; 2-38-66; 67-68-19.***

---

Участники долевой собственности на землепользование СХПК «Туруновский» Чебоксарского района ЧР жители деревни Вурманкас-Туруново на основании решения общего собрания участников долевой собственности СХПК «Туруновский» от 16 апреля 2006 года сообщаем о своем намерении выделиться из долевых земель СХПК «Туруновский» в счет доли в праве в поле №6 полевого севооборота с северовосточной стороны приусадебных земельных участков жителей ул. Молодежная, д.Вурманкас-Туруново. При этом Петрова В.Д. с площадью 4,18 га (пашня) участок непосредственно примыкающий к приусадебному земельному участку кадастровый № 21:21:300501:0126 дома № 10 кадастровый № 21:21:300501:0125 Васильева Н.И., Александров А.Н., Александрова К.А., Спиридонов С.А., Васильев А.В., Яковлева А.П., Яковлев И.Я., с площадью 2,09 га (пашня) на каждого собственника земельной доли от участка Петровой В.Д. в сторону автодороги в с.Туруново, а Ефимов Г.Е. с площадью 4,18 га (пашня) и Ефимова З.П., Ефимов А.Г., Ефимов А.Г., Дмитриев И.Д., Дмитриева А.П., Дмитриев В.И., Дмитриева И.И., Мазеев В.С., Мазеев А.С., Сергеева А.М., Степанова А.И., Степанова Н.А., Терентьев А.Г., Иванова Н.Е., а также Николаев В.В., проживающий в г.Чебоксары, пр.Мира 98-143 по 2,09 га (пашня) на каждого собственника земельной доли от участка Петровой В.Д. в сторону реки «Кушканарка».

Возражения принимаются в течение месяца со дня опубликования настоящего объявления в адрес МРО №5 Управления Роснедвижимости по ЧР п.Кугеси, ул.Шоссейная, 9.

---

Предполагается предоставить в собственность земельный участок площадью 0,03 га, расположенный на территории Синьяльского сельского поселения Миряковой В.Ф.

---

Участники долевой собственности на землепользование СПК «Пучах» Чебоксарского района Сурков Валерий Викторович 0,63 га, Быстрова Наталия Викторовна 0,63 га, Морышкина Галина Викторовна 0,62 сообщают о своем намерении выделить земельный участок второго поля юго-восточней д.Синьял-Покровское площадью 1,88 га пашни. Возражение просим присылать по адресу: п.Кугеси, ул.Шоссейная, 15.

---

Участники долевой собственности землепользования СХПК «Атăл» Плотникова В.И., прож. в д.Хорнзоры, ул.Березовая, д.17, Матюшкина Н.Н., прож. в д. Кибечкасы, ул. Совхозная, д.31 сообщают о своем намерении выделить земельные участки в поле №2 второго полевого севооборота около д.Адылъялы по 1,47 га. Возражения просим присылать в течение месяца со дня выхода в печать по адресу: п.Кугеси, ул. Шоссейная, д.9.

---

Предполагается предоставление в собственность за плату земельного участка площадью 0,10 га с кадастровым номером 21:21:070105:0057 (земли поселений) для огородничества, расположенного по адресу: ЧР, Чебоксарский район, с.Синьялы, ул.Мельничная.

---

Участник долевой собственности на землепользование СХПК им.И.Г.Кадыкова Чебоксарского р-на ЧР Иванов А.С, прож-й по адресу: Чебоксарский район, п.Кугеси, ул.Энгельса, д.10, сообщает о своем намерении выделить земельный участок по следующим границам, полям севооборота, ориентирам и площадям: 1) I поле 1-го полевого севооборота, раб. участок №1, 100 м южнее здания ветеринарной лечебницы по ул.Розовая, д.1 г.Чебоксары, , площадью до 0,36га на пашне, для создания личного подсобного хозяйства, в счет 1/8496 долей в праве общей долевой собственности от 2598,54 га. Площадь образуемого участка осуществляется в пределах кадастровой стоимости, установленной для сельскохозяйственных угодий, в границах которых образуется данный земельный участок. Возражения прошу присылать в течении месяца со дня выхода в печать настоящего объявления в мой адрес.

---

Предоставляется в собственность за плату гражданину Федорову Вадиму Михайловичу земельный участок площадью 0,35 га с кадастровым номером 21:21:07 10 01:0072, расположенный по адресу: Чувашская Республика, Чебоксарский район, д.Чиршкасы (земли поселений), для ведения личного подсобного хозяйства без права возведения на нем зданий и строений.

Адрес: с.Синьялы, ул.Центральная, д.34 Администрация Синьяльского сельского поселения

ТĂВАН ЕН
("КРАЙ РОДНОЙ")
Чебоксарская районная газета

Учредители:
Министерство культуры, по делам национальностей, информационной политики и архивного дела Чувашской Республики,
РГУ " Редакция Чебоксарской районной газеты "Тăван Ен",

Газета зарегистрирована в Управлении Федеральной службы по надзору за соблюдением законодательства в сфере массовых коммуникаций и охране культурного наследия по Приволжскому федеральному округу 8 ноября 2005г. ПИ №ФС 18-2477

429500, Чебоксарский район, пос. Кугеси, ул. Шоссейная, 13.

Газета выходит на чувашском языке, с периодической подачей страниц на русском, два раза в неделю - по средам и субботам.

Рукописи не возвращаются и не рецензируются. Опубликованные мнения не всегда совпадают с точкой зрения редакции. За достоверность материалов ответственность несут авторы. За содержание рекламы ответственность несет рекламодатель.

Гл. редактор - 2-12-61, отдел сельского хозяйства, отдел писем ,отдел общественно-политической жизни - 2-21-88, бухгалтерия - 2-13-80, 2-12-59. E-mail: tavan.ru.@mail.ru; gazeta@chebs.cap.ru

Номер отпечатан в ГУП "ИПК Чувашия". Тел.21-00-23.

Гл. редактор В.Т.СОРОКИН

Дежурный по номеру: И.В.ВАСИЛЬЕВА

Печать офсетная. Объем 1,0 печ. лист.
Номер подписан в печать: 30.05.2006 г. в 16 час. 00 мин.
Тираж 1815. Заказ № .
Индекс газеты - 54820.